26-мěш çул тухать: Хакě 20 пус.

1943
АПРЕЛЬ
20
ЫТЛАРИКУН
84(6321) №

Чăваш Коммуни

Пěтěм тěнчери пролетарисем, пěрлешěр!

ВКП(б) ОБКОМĚПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĚН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĚН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĚН
ХАÇАЧĚ

Совет Информаци Бюровěнчен

Апрелěн 17-мěшěнчи каçхи пěлтерӳ

Апрелěн 17-мěшěнче фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Баренц тинěсěнче пирěн карапсем тăшманăн 12.000 тонна водоизмещениллě транспортне путарнă.

* * *

Апрелěн 16-мěшěнче фронтăн тěрлě участокěсенче пирěн авиаци чаçěсем нимěçсен 6 танкěнчен кая мар тата войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 40 автомашинине пěтерсе тăкнă е сиенленě, боеприпассен складне сирпěнтернě, артиллерипе минометсен 8 батарейине пусарнă.

* * *

Кубань çинче пěр соединенин чаçěсем хастарлăн çапăçса пынă тата уйрăм участоксенче тăшманăн контратакисене сире-сире пынă. Икě кун хушши пулнă çапăçусенче фронтăн çав участокěнче 4.000 çити нимěç салтакěпе офицерне пěтерсе тăкнă, 17 танка персе çěмěрнě е çунтарса янă, 39 оруди, 31 миномет тата 100 ытла пулемет пěтерсе тăкнă. Пирěн боецсем илнě трофейăсем хушшинче 8 оруди пур. Тепěр участокра тăшман темиçе хут та контратака тума хăтланнă. Пирěн позицисем çине чи малтан румынсем пынă, вěсен хыçěнчен нимěç автоматчикěсем пынă. Совет подразделенийěсем çав тери вирлě пеме пуçласан, румынсем каялла çавăрăннă. Нимěçсем вара хăйсен „союзникěсем" çине, румынсем çине пеме пуçланă. Пирěн боецсем хирěç пырса çапнипе тăшмана ыватса янă та хăйсен позицийěсене лайăхлатнă. Çав участокра кăна тăшманăн персе çěмěрнě 3 танкě тата салтакěсемпе офицерěсен 300 çити вилли выртса юлнă.

* * *

Хěвеланăç фронтěнче пирěн чаçсем пехота пухăнса тăнă вырăна тата тăшманăн огневой точкисем çине персе тăнă. Пěр чаçăн артиллерисчěсемпе минометчикěсем нимěç пехотин пěр ротине çити пěтерсе тăкнă, артиллерин 5 батарейине тата минометсен 2 батарейине пусарнă. Зенитнăй артиллери нимěç самолетне персе ӳкернě.

* * *

Изюмран кăнтăртарахра пěр чаçăн подразделенийěсем вырăнти çапăçусем туса пырса 200 нимěç салтакěпе офицерне çити пěтерсе тăкнă. Нимěçсен 2 танкне персе çěмěрнě тата войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 20 автомашинăна пěтерсе тăкнă.

* * *

Волхов фронтěнче капитан Жичинский командир пулса ертсе пыракан батарейăн зенитчикěсем нимěçсен 3 бомбардировщикне персе ӳкернě. Пěр самолетăн экипажне тыткăна илнě. Старши сержант Колесников противотанковăй пăшалпа персе „Юнкерс—87" йышши бомбардировщика персе ӳкернě.

* * *

Орел облаçěнче кěрешекен партизансен темиçе отрячě мартăн 31-мěшěнчен пуçласа апрелěн 14-мěшне çитиччен нимěçсен войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 13 эшелонне ӳпěнтерсе янă. Дубровка—Орджоникидзеград хушшинчи çул участокěнче чугунçула сирпěнтернě, поездсене çӳреме чарнă. Тепěр участокра Кравцов ячěне хисепленекен отрядри партизансем апрелěн 8-мěшěнче чугунçул çине минăсем лартса тухнă. Минăсем çине пырса кěнě нимěç эшелонě сирпěнсе кайнă. 17 вагон арканнă, 2 зенитнăй оруди пěтнě тата темиçе вуншар гитлеровец вилнě. Иккěмěш çулпа пыракан çар эшелонě крушени пулнипе çунма пуçланă.

* * *

Ростов облаçěнчи Новошахтинскра пулнă вăхăтра нимěçсен фашистла ирсěрěсем хулапа ун çывăхěнчи халăха 4.000 çынна яхăн вěлерсе пěтернě. Нимěçсем оккупациленě вăхăтра кашни кунах гестапо çуртěнчен заключеннăйсен ушкăнěсене персе пăрахма иле-иле тухнă. Вěлерессе аэродром çинче, Багалтай текен вырăнта тата шыв башни патěнче вěлернě. Вěлерес умěн палачсем çынсенчен çав тери иртěхсе мăшкăлланă. Новошахтинска ирěке кăларнă хыççăн фашистсен аллинчен вилнě çынсене пытарма ятарласа тунă комисси гитлеровецсем персе пăрахнă совет гражданěсене шăтăксенчен тепěр хут чавса кăларать. Нимěç палачěсем вěлернě мирлě совет çыннисен списокěсене туса комисси актсем çырать. Кашни виле çинчех тискеррěн асаплантарнă йěрсем юлнă. Нимěçсем хулара пурте хисепленě Данил Писменский ватă горняка тулласа вěлернě те унăн виллине чул кăларакан шăтăка пăрахнă. Электровоз çинче машинист пулса ěçленě Антонина Ивановăна гитлеровецсем çурăмран тата пуçран 15 çěртен штыкпа чикнě; детсад заведующийě пулса ěçленě Екатерина Паршинăна персе пăрахиччен нимěçсем аллисене татнă; 3-мěш номерлě шахта крепильщикě пулса ěçленě Василий Долговăнне сăмсине касса илнě тата куçěсене чиксе шăтарнă. Фашистла тискерсем Зинаида Чебакинăна, унăн 9 çулхи хěрне тата 7 çулхи ывăлне вěлернě. Борзенко шахтера, Берестянский инженера тата ытти çынсене те тискеррěн асаплантарса вěлернě. Нимěçсем асаплантарса персе пăрахнă совет çыннисен çěршер виллисене халь хула садěнче тăванла вилě шăтăкне пытарнă.

Апрелěн 18-мěшěнчи каçхи пěлтерӳ

Апрелěн 18-мěшěнче фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Иртнě эрнере, апрелěн 11-мěшěнчен пуçласа 17-мěшне çитиччен, сывлăшри çапăçусенче тата тăшман аэродромěсем çинче нимěçсен 302 самолетне пěтерсе тăкнă. Çав вăхăт хушшинче пирěн 103 самолет пěтнě.

* * *

Апрелěн 17-мěшěнче фронтăн тěрлě участокěсенче пирěн авиаци чаçěсем нимěçсен войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 20 автомашининчен кая мар пěтерсе тăкнă е сиенленě, боеприпассен 2 складне сирпěнтернě, артиллерипе минометсен 10 батарейине пусарнă тата тăшманăн чугунçул эшелонне аркатнă.

* * *

Кубань çинче пирěн чаçсем тăшманăн пехотипе танкěсен контратакисене сире-сире пăрахнă. Пěр участокра темиçе кун каярах пěр соединенин боецěсем пěр паха высотана йышăнса илнě. Çав высотана тепěр хут каялла илес шутпа нимěçсем паян 7 хут атакăланă. Пěр кун хушшинче кăна çак участокра тăшманăн 1.400 салтакпа офицера çити пěтнě. Фронтăн тепěр участокěнче те хаяр çапăçусем пуçланса кайнă, унта нимěçсем пехотăн 2 полкне ытла атакăна янă. Пехота чаçěсене тăшман авиацин пысăк вăйěсем пулăшса пынă. Çав позицисене оборонăлакан пирěн чаçсем, тăшман атакисене сирсе пăрахса, ăна пысăк çухатусем кӳнě. Туллимар даннăйсем тăрăх, нимěçсен 25 самолетне персе ӳкернě, 8 самолетне персе сиенленě.

* * *

Хěвеланăç фронтěнче пирěн чаçсем хăйсем йышăнса тăракан позицисене лайăхлатса пынă. Артиллерипе минометсенчен персе тăнипе нимěçсен пехотин пěр ротине ытла пěтерсе тăкнă. Тăшман артиллерийěн 2 батарейине тата минометсен батарейине пусарнă.

Пирěн летчиксем тăшман аэродромě çине бомбăсем пăрахнă. Нимěçсен 30 самолетне çити пěтерсе тăкнă е сиенленě тата горючи складне çунтарса янă.

* * *

Балаклейăран кăнтăртарахра пирěн подразделени, разведка туса кěрешсе пырса, 80 гитлеровеца пěтерсе тăкнă. Совет артиллерийě тăшманăн 3 дзотне аркатнă тата грузсем тиенě 16 лавне пěтерсе тăкнă.

* * *

Волхов фронтěнче пěр чаçăн артиллерисчěсем нимěç артиллерийěн 2 батарейине тата ултă кěпçеллě 2 миномене пусарнă. 70 çынлă нимěç отрячě пирěн оборонăн малти хěррине тěпчесе пěлме хăтланнă. Пăшалсемпе пулеметсенчен пенипе гитлеровецсем йěркесěррěн каялла чакнă, çапăçу хирěнче вěсен 40 вилли выртса юлнă.

* * *

Ленинград сывăхěнче пирěн зенитнăй артиллери нимěçсен «Юнкерс-88» йышши 6 бомбардировщикне персе ӳкернě. Кунсăр пуçне пирěн летчиксем сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 2 самолетне персе ӳкернě.

* * *

Нимěçсен 32-мěш гренадерски дивизийěнчи 94-мěш полкăн 8-мěш ротинчен тыткăна лекнě обер-ефрейтор Курт Косвейлер çапла каласа панă: «Грауденц хулинче (Польша) эпě пиртě тискер япала куртăм. Ман куç умěнчех Польшăн çěршер мирлě гражданěсене персе пăрахрěç. Пěр кăнтăрла СС отрячěсем çěршер çынна хăваласа пухса хула хыçне илсе кайрěç те вěсене унта шăтăксем чавтарчěç. Çакăн хыççăн эсэсовецсем хăранипе ăнран кайнă çынсене тăратса тухрěç те вěсене черетпе пере-пере пăрахрěç. Çак тискер ěçе вырăнти гарнизонри нумай салтаксем курчěç».

* * *

Грецире партизанла юхăм сарăлса пырать. Нумаях пулмасть партизансем итальянецсен моторизованнăй колоннине тапăннă. Пуçланса кайнă çапăçура Греци патриочěсем 57 итальянеца пěтерсе тăкнă. Партизансем 7 автомашина, 5 пулемет тата патронсем нумай тытса илнě. Пирея портěнче патриотсем итальянецсен грузсем тиенě карапне вут тивертнě.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумěн Хисеплě грамотисене пани

Çак кунсенче Чăваш АССР Верховный Совет Президиумěн Председателě З. А. Андреева юлташ чăлха фабрикине йěркелесе ěçе ярас тата çěнě йышши таварсем кăларас тěлěшпе тунă çитěнӳсемшěн наградăланă рабочисене, инженерла-техникла тата ертсе пыракан работниксене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумěн Хисеплě грамотисене пачě.

Производствăра хăйсен вăйне шеллемесěр ěçленěшěн Хисеплě грамотăсене çаксем илчěç: кетлярксем— А. Ф. Андреянова, У. Г. Гурьева, Е. И. Каменецкая, мотальщица Р. И. Виноградова, вязальщицăсем—Ф. П. Литвинова тата П. А. Яшкина.

Производствăна ăнăçлăн ертсе пынăшăн грамотăсене çаксем илчěç: вязально-кетельнăй цех начальникě М. А. Белко, производствăллă вěренӳ начальникě Е. И. Булых, механически мастерской начальникě А. С. Штемберг, вязальнăй цех мастерě М. Б. Боруля.

Бригадăна ăнăçлăн ертсе пынăшăн столярнăй мастерской бригадирне М. М. Асеева грамота пачěç.

Стахановла ěçлесе производствăна ертсе пынăшăн грамотăсене вязально-кетельнăй цехри старши мастер Г. С. Гризь юлташ, смена начальникě Л. Е. Мочайлова юлташ, вязальнăй цехăн смена начальникě М. Ф. Лукяненко юлташ, старши мастер М. И. Каменецкий илчě.

Малалла З. А. Андреева юлташ техно-ткацки фабрикăран наградăланисене грамотăсем пачě.

Производствăра хăйсен вăйне шеллемесěр ěçленěшěн грамотăсем çак рабочисем илчěç: ткачихăсем А. А. Андреева, К. Е. Барабанова, М. А. Кунстманис, А. Л. Лейферова, М. Н. Николаева тата токарь М. А. Береговский.

Производствăна ăнăçлăн ертсе пынăшăн грамотăсене çаксем илчěç: производство пайěн начальникě А. С. Гельман, техника контролěн начальникě С. А. Каневская, директор çěсене туса пыраканě—фабрикăн главнăй инженерě Я. И. Рохлин.

Стахановла ěçлесе пынăшăн тата производствăна ертсе пынăшăн грамотăна фабрикăри старши мастер Б. Л. Рутман илчě.

Унтан З. А. Андреева юлташ табак фабрикине йěркелесе ěçе янăшăн тата çěнě йышши продукци тума вěренсе çитнěшěн табак фабрикинчи уйрăмăнах палăрнă рабочисене, инженерла-техникла тата ертсе пыракан работниксене грамота пачě.

Грамота илнисем хăйсен коллективěсен ячěпе Правительствăна тав турěç, малашне тата лайăхрах ěçлеме сăмах пачěç.

Юлашкинчен Чăваш АССР Верховный Совет Президиумěн Председателě З. А. Андреева юлташ наградăланисене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумěн Хисеплě грамотине илнипе тав турě, малашне вěсене çěнě çитěнӳсем туса Хěрлě Çара пулăшас ěçре вирлěн ěçлеме чěнчě.

Чăваш АССР-ěнчи колхозсенче ěçлекен вăкăрсем пăхса ӳстермелли мерăсем çинчен

Чăваш АССР Совнаркомěпе ВКП(б) Чăваш Обкомěн бюровě йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

Чăваш АССР Совнаркомěпе ВКП(б) Обкомěн бюровě райисполкомсене, ВКП(б) райкомěсене тата колхозсен правленийěсене çакăн çинчен асăрхаттарассě: лашасен пěр пайне Хěрлě Çара илнě май тата колхозсенче ялхуçалăх ěçěсем чылай нумайланнине пула, ялхуçалăхěнчи чěрě туртăм вăйěн хисепне хăвăрт ӳстерес задача уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăрать. Лашасен хисепне вăйлăн йышлăлатса пынипе пěрлех, чěрě туртăм вăйěн хисепне хăвăрт ӳстермелли чи лайăх майсенчен пěри—колхозсенче ěçлекен вăкăрсем пăхса ӳстерни пулса тăрать.

Чăваш АССР Халăх Комиссарěсен Совечěпе ВКП(б) Обкомěн бюровě çапла йышăнаççě:

1. Республикăри колхозсенче 1943 çулта 9.600 пуç ěçлекен вăкăр пăхса ӳстерме палăртса план çирěплетес, вăл плана районсем тăрăх хушса çырнинче кăтартнă пек валеçсе тухас. Райисполкомсемпе ВКП(б) райкомěсене ěçлекен вăкăрсем пăхса ӳстермелли плана кашни колхоз патне вунă кунлă срокра çитерме, палăртса панă заданисене пурнăçа кěртнине яланах тěрěслесе тăма тата вěсене пěр сăмахсăрах пурнăça кěртмелле тума хушас.

2. Наркомзема, райисполкомсене тата колхозсен правленийěсене кăçалхи майăн 1-мěшěччен пур колхозсенче те 1941—1942 çулсенче çуралнă вăкăрсене кӳлсе ěçleme вěрентмешкěн суйласа илме хушас тата вěсене 1943 çулти июнěн 1-мěшчен кастарма, çак ěçе зоотехниксемпе ветеринарсене явăçтарма хушас. Аратлă вăкăрсене кастарма юрамасть, вěсене производительсем пăхса ӳстерме уйрăм ушкăна уйăрса хăварас пулать.

3. Колхозсенче вăкăрсене кастарас ěçе вăхăтра туса ирттерес майпа, çак ěçе ветеринари персоналěсěр пуçне райçěрěç пайěсемпе колхозсен зоотехникěсене те хутшăнтармалла, çавăнпа та кăçалхи апрелěн 20-мěшěнчен пуçласа 25-мěшне çити вăхăтра пур зоотехниксене те ялхуçалăхěнчи выльăх-чěрлěхсене кастраци тума вěрентекен курссенче вěрентсе кăлармалла, вăл курссене ветеринарин аслă врачě ертсе пымалла.

Выльăх-чěрлěхсене кастарас ěçе вăхăтра туса ирттерме зоовет-пунктсене медикаментсемпе инструментсем тупса пама Наркомзема хушас.

4. Ěçлекен вăкăрсем пăхса ӳстермешкěн уйăрса илсе кастарнă вăкăрсен сылтăм майраки е хăлхи çинче паллă туса хăвармалла. Паллă туса уйăрнă вăкăрсене районри çěрěç пайě ирěк памасăр браклама колхозсене чарас.

5. Ěçлекен вăкăрсене тěрěс пăхса усрас тата вěсене ялхуçалăхěнче ěçлеме вăхăтра вěрентсе хатěрлес ěçе туса пыма колхозсенче чи лайăх колхозниксемпе колхозницăсенчен вăкăрсене пăхакансене уйăрмалла. Ěçлекен вăкăрсене пăхакансем валли кашни çынна 8—10 вăкăр çирěплетсе, парса ěç норми тума колхозсене сěнӳ парас, вěсене ěçшěн хăйсем пăхакан выльăхсем мěнлине шута илсе тӳлемелле. Вăкăрсене пăхакансене вěсем ěçлеме вěрентнě кашни вăкăршăн 10 ěçкунěнчен пуçласа 15 ěçкунне çити хушса тӳлемелле тăвас.

6. Райисполкомсен, ВКП(б) райкомěсен тата колхозсен правленийěсен вăкăрсене ěçлеттерме кӳлмелли çемçе хатěрсем тата тивěçлě транспорт инвентарěсем туса хатěрлессине организацилеме хушас. Ěçлекен вăкăрсене яланах икшерěн кӳлсе ěçлеме колхозсене сěнӳ парас.

Чăваш АССР Совнаркомěн Председателě А. МАТВЕЕВ.

ВКП(б) Чăваш Обкомěн Секретарě И. ЧАРЫКОВ.

Чăваш АССР-ěнчи колхозсенче 1943 çулта ěçлекен вăкăрсем хатěрлемелли план

Районсем	Вăкăрсен хисепě
Улатăр	280
Элěк	420
Вăрнар	340
Йěпреç	230
Ишлей	500
Калинино	350
Канаш	375
Куславкка	270
Комсомольски	360
Кувакински	380
Хěрлě Чутай	320
Сěнтěрвăрри	280
Октябрьски	330
Пăрачкав	400
Советски	250
Сěнтěр	550
Первомайски	160
Красноармейски	300
Вăрмар	400
Çěрпӳ	350
Шупашкар	380
Чкаловски	350
Шăмăршă	200
Шăхасан	400
Çěмěрле	250
Етěрне	350
Елчěк	500
Тăвай	320
Шупашкар хули	5
ЧАССР тăрăх	9.600

ОБЯЗАТЕЛЬСТВĂНА ПУРНĂÇЛАÇÇĚ

ШĂХАСАН. (Хамăр корр.). Районри апат-çимěç комбиначě (управляющийě Лившиц юлташ) Май уявě умěнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса иккěмěш квартал планне Май уявě тěлне 50 процентран кая мар тултарма, продукци пахалăхне хăпартма обязательство илнě.

Апат-çимěç комбиначě апрелěн 7 кунě хушшинче уйăхри плана 98 процент пурнăçларě.

Апат-çимěç комбиначě сироп, повидло, сăра тăвать. Çак кунсенчех мальцевой экстракт тата квас тума тытăнаççě.

В. Веселов.

Выльăх-чěрлěх ěрчетес ěçри пысăк çитěнӳсемшěн

Чăваш республикине выльăх-чěрлěх ěрчетес ěçре тунă çитěнӳсемшěн Оборонăн Государственный Комитечěн куçса çӳрекен Хěрлě ялавне панă ятпа апрелěн 18-мěшěнче республикăри радиомитинг пулса иртрě.

Митинга ВКП(б) Обкомěн секретарě Чарыков юлташ уçрě.

Чи малтан ВКП(б) Шупашкар райкомěн секретарě Караушев юлташ сăмах илет. Пирěн район, — тет Караушев юлташ, — иртнě çулта ялхуçалăх ěçěсене ăнăçлăн туса ирттерсе, ВКП(б) Обкомěпе Совнаркомěн куçса çӳрекен Хěрлě ялавне илчě. Обществăллă выльăх-чěрлěх ěрчетес плана та ирттерсе тултарчě. Районри колхозниксемпе колхозницăсем кăçал татах та пысăкрах ăнăçусем тăвас кăмăлпа çунаççě. Вěсем çуракине кěске вăхăтра тата пысăк пахалăхпа туса ирттерессишěн кěрешеççě, выльăх-чěрлěх хисепне 1943 çулта 20—25 процентран кая мар ӳстерме обязательство илчěç. Фронтпа çěршыв валли тата ытларах тырпул, аш-какай, промышленность валли чěртавар парар. Çавăн пек тума хушать пире аслă Сталин.

Ишлей райисполкомěн председателě Херсонов юлташ районри животноводсем хăйсен вăйне шеллемесěр ěçлени çинчен каласа парать. 1942 çулта выльăх-чěрлěх фермисенчи 139 работник ěçшěн хушса илнě. Колхозсем выльăх-чěрлěхсем валли çěнě витесем туса ларттарěç, пуррисене юсаса ăшă тытакан турěç, кадрсем хатěрлесе çитерчěç, нумай колхозсем çамрăк выльăхсене пěтěмпех сыхласа хăварчěç. «Звезда» колхоз 60 сысна çури, 35 путек пăхса ӳстерчě, выльăх-чěрлěх вилни кунта пулман.

Анчах малта пыракансен опычěпе пур колхозниксене те паллаштарман-ха. Хăшпěр колхозсенче çамрăк выльăхсем вилни те пулнă, вěсем валли çуртйěр хатěрлемен. Çавăн пек фактсем çинчен райсовет исполкомěн ларăвěсенче сӳтсе-явнă.

— Çитменлěхсене пурне те пěтеретпěр, ВКП(б) Обкомěпе Чăваш АССР Совнаркомěн куçса çӳрекен Хěрлě ялавне, выльăх-чěрлěх ěрчетес ěçри ăнăçусемшěн илнěскере, район хăйěн аллинче çирěп тытса тăрě, — тесе шантарса калать Херсонов юлташ.

Хăйěн трактор бригадин çитěнěвěсем, çинчен Елчěк МТС-ěнчи чи лайăх бригадир Веков юлташ каласа парать.

— Пирěн, республикăна Оборонăн Государственный Комитечěн куçса çӳрекен Хěрлě ялавне памалла туни çинчен пěлтернине, — тет ВКП(б) Вăрнар райкомěн секретарě Коротков юлташ,—районри колхозниксемпе колхозницăсем пысăк савăнăçпа кěтсе илчěç. Пухусемпе митингсенче колхозниксем 1943 çулта выльăх-чěрлěх ěрчетмелли плана тултарма кăна мар, тата ирттерсе те тултарма, государствăна ялхуçалăх продукчěсем парассине срокчен вěçлеме обязательство илчěç. Эпир сурăхсем енěпе выльăх-чěрлěх ěрчетмелли кăçалхи плана тултартăмăр. Малта пыракан колхозсем вăл плана кăçалхи июнěн 1-мěшě тěлне пěтěмěшпех тултарма сăмах пачěç, фронтовиксен çемьисене пурне те ěне туянтарма, фашистла пусмăрлăхран ирěке кăларнă районсене выльăх-чěрлěх парса пулăшма пулчěç.

Колхозниксем ака ěçěсене пысăк çěкленӳпе туса пыраççě. Ир пулакан çурхи культурăсене 500 гектар ытла акнă ěнтě. Пысăк тухăçлă тырпул туса илес тата выльăх-чěрлěх продуктивноçне ӳстерес тěлěшпе пěтěм вăя хурса ěçлěпěр.

Митингра çавăн пекех тата, Кольцовкăри Ленин орденлě, Сталин ячěпе тăракан колхоз председателě Васянин тата Калинино районěнчи Айкăш ялсовечěн председателě Ананьев юлташсем тухса каларěç.

— Пирěн колхоз кăçал çуракине пěлтěрхинчен лайăхрах хатěрленчě, — тет Етěрне районěнчи «Сура» колхозри сěт-çу фермин заведующийě Кузьмина юлташ. — Пирěн мěн кирлине пурне те хатěрлесе çитернě. Колхозра 5 ферма, пур выльăхсем енěпе те государство планне ирттерсе тултарнă. Комсомолецсем колхозра лайăх ěçлеççě, вěсем стахановла ěçěн тата дисциплинăллă пулнин примерне кăтартаççě. Стена хаçачě тухса тăрать, зоотехникăна вěренес ěçе организациленě. Нумаях пулмасть мана Чăваш АССР Верховный Совет Президиумěн Хисеплě грамотине парса наградăларěç. Эпě тата лайăхрах ěçлеме пулатăп.

Сěнтěр районěнчи «Çěнě Юнкă» колхозри паллă свинарка Вазикова юлташ хăйěн опычě çинчен каласа парать.

— Республика Оборонăн Государственный Комитечěн куçса çӳрекен Хěрлě ялавне илме тивěçлě пулни пирěншěн пуриншěн те пысăк чыслăх пулса тăрать. Çак награда пирěн çине татах та пысăкрах ответлăх хурать. Эпě свинарка пулса пěрремěш çул мар ěçлетěп, пěтěмпе 625 сысна çури пăхса ӳстертěм. Кашни ама сыснаран эпир вăтамран 22 çурă илетпěр, пěри вара 28 çурă пачě. Иртнě çулта эпě 970 ěçкунě ěçлесе илтěм. Эпě хамăн ěçе юрататăп, зоотехника хушнисене пурне те пирěппěн пурнăça кěртсе пыратăп. Республикăри фермăсенчи работниксене пурнечте ыванма пěлмесěр ěçлеме, фронтпа çěршыва пулăшма чěнетěп.

Радиомитинг хупăнас умěн парти Обкомěн секретарě Чарыков юлташ пысăк сăмах тухса каларě, вăл выльăх-чěрлěх ěрчетес тěлěшпе республика умěнче тăракан конкретнăй задачăсем çинче чарăнса тăчě. Чарыков юлташ партипе совет тата комсомол организацисене, республикăри мěнпур колхозниксемпе колхозницăсене, республикăна Оборонăн Государственный Комитечěн куçса çӳрекен Хěрлě ялавне пани çине ответлесе, татах та хěрӳллěнрех ěçлеме, социализмлă ялхуçалăхěнчи тата обществăллă выльăх-чěрлěх ěрчетес ěçри малашнехи ӳсěмсемшěн кěрешме, вăрçă вăхăтěнчи иккěмěш çуракине большевикла ирттерме тата çапла майпа, фронтпа çěршыв валли ытларах тырпул, аш-какай, пахча çимěçсем тата промышленность валли чěртавар туса пама чěнчě.

—————О—————

ЮТÇĚРШЫВ ĚÇĚСЕН ХАЛĂХ КОМИССАРИАТĚНЧЕ

СССР Правительствипе Бельги правительстви хушшинче пулса иртнě калаçусем хыççăн килěшӳ тунă. Çав килěшӳ тăрăх, Совет Союзěн Бельги правительстви çумěнчи дипломатиллě представительствине тата Бельгин СССР правительстви çумěнчи дипломатиллě представительствине иккěшне те миссисенчен посольствăсем туса хунă.

Икě çěршывăн посланникěсене те посол ячěсем панă.

АРКАДИЙ ЭСХЕЛЬ

ĂМĂРТКАЙĂК

ПОЭМА

14. „Кăвак дивизи"

Хăш чухне вĕçевçĕн ĕçĕ —
Мыскараллă япала.
Темĕнле «Кăвак дивизи»
Çитнĕ, терĕç, пĕр яла.

Мĕнле çар вăл? Мĕн амакшăн
Килнĕ пирĕн çĕршыва?
Мĕн шырать вăл, мĕн тупасшăн?
Тата мĕншĕн вăл «кăвак»?

Орлова штаба чĕнтерчĕç;
Ĕç пырать кунта кал-кал.
— Çавсене кăшт тĕрĕслесчĕ,-
Терĕ пирĕн генерал.

— Анланан, Орлов, хăвах эс,
Мĕн пирки сăмах пырать:
Чăнахах-и, кăвакках-и?
Кăвак мар-тăк, кăвакарт.

Çав дивизи килнĕ имĕш
Хай Испани çĕрĕнчен.
Шăлса пухнă ăна нимĕç
Мĕнпур пек хупахсенчен.

Йĕксĕксем çурран танкканă,
Тунă питĕ пысăк марш.
Вĕсене халь кирлĕ «канăç»,
Мĕншĕн «канăç» парас мар!

— Хатĕрлен, Милостивенко, —
Орлов чĕнчĕ штурманне. —
Эпĕ карапа тием-ха,
Тием вырăс «кавăнне».

Леш «кăваккисем» халь путнă
Питĕ тутлă ыйăха.
Халь те тутлă, тата тутлă,
Тата тутлă пулĕ-ха.

Таçтан летчикăн вăраннă
Çак «линкка-линкка» кĕвви.
Çав юрра юрланă майăн
Сисĕнмен те хĕл сивви.

«Вăрăм çулра ырнă хыççăн
Сире канăç кирлĕ.
Юрĕ, юрĕ, пырса хыçăп,
Канăç пулĕ вирлĕ.

Сивĕре пит ĕнтĕркерĕн —
Ашăнма вут ыpă.
Ытлашши нумай кĕттермĕп,
Вут тиесе пырăп».

Лешсем тутлă ыйăх витĕр
Çак кĕвве, паллах, илтмен.
Вырăс шартлама сивви те
Вĕсене пӳртре витмен.

Халь вĕсемшĕн—вырăс ан кил,
Ан татах ыйхисене.
Тĕлĕкре çап-çутă ангел
Ачашланă вĕсене.

Анчах «ангел»—тват моторлă,
«Голубая двойка» вăл!
Кĕрлесе каçать фронт урлă,
Çĕклет вăйлă çил-тăвăл.

Ку—Гастелло самолечĕ,
Ана пĕтĕм фронт паллать:
«Голубая двойка», теççĕ,
Вĕç сатуррăн малалла.

Хăш чухне вĕçевçĕн ĕçĕ
Чиперех тĕлĕнтерет:
Сĕп синче—«Кăвак дивизи»,
«Кăвак двойка»—тӳпере.

Ситменне тата тӳпи те,
Каçĕ, юрĕ те кăвак.
Кăн-кăвак çанталăк витĕр
«Кăвак двойка» çул хывать.

— Ну, мĕнле Милостивенко?—
Орлов ыйтрĕ штурмăнран.
— Тĕллеве кăшт çитеймен-ха,
Çапла тӳр тыт, капитан.

Ответ пачĕ çамрăк штурмăн,
Вăл нихçан та йăнăшман.
Унпала ĕçре шар курмăн
Эс, юлташăм капитан!

Орлов хăй те питĕ лайăх
Тавçăрать кунти çула.
Çĕрлехи çак ăмăрткайăк
Кунта вĕçнĕ-çке чылай.

— Эх, декабрь питĕ капăр,
Штурман, пăхсам çĕрелле.
— Капитанăм, сывхаратпăр,
Ял çине халь кĕмелле.

Моторсем çакна ăнланнăн
Пусараççĕ кĕрлевне.
Самолет хайхи вăрахăн
Шăвать лăпкă ял тĕлне.

Çĕр шăпах. Пĕр чĕрĕ чун та
Çук пек пĕтĕм тĕнчере.
Вилĕм тĕсĕ çапнă чăн та
Тăшман пуснă çак çĕре.

Кăн-кăвак тăрать çанталăк,
Кăн-кăвак тăрать тӳпе.
Асатать Орлов малтанлăх
Пилĕк бомба йĕркипе.

Ответ çук-ха. Бомбăсем ççç
Çурăлаççĕ, кĕрлесе.
Вулккан тапнăн çĕр кисренчĕ,
Тăр-чĕтренчĕç çăлтăрсем.

Çĕр çинчен ответ памаççĕ.
— Çан-ха, тусăм, вăйлăрах!
Летчиксем хайхи анаççĕ
Кăшт тата аялрах.

— Ăшала, Милостивенко!
«Кавăн» пултăр тутлăрах.
Чăн-чăн «кавăн» астивмен-ха
Çавă пыйтлă вăр-хурах.

Капитан Орлов ял çийĕн
Çаврăнать те çаврăнать.
— Курăр, ак сире Россия,
Çийĕр пирĕн «кавăна»!

— Тутă пулăр, лăк тăранăр,
Ӳлĕм ан ыйтăр вара!—
Йĕксĕксем хайхи вăраннă
Чупкалаççĕ çулăмра.

Ялкăшать ялта вут-çулăм,
Хайхи пыйтлă йытăсем,
Хӳрисем айне вут хунăн,
Вăркăнаççĕ ĕрĕхсе.

Орлова кино пек ĕнтĕ
Курăнать çак тамаша.
— Пулеметсенчен халь ĕнтĕр,—
Вăл хушать экипажа.

Акă харăс юрра ячĕç,
Вĕсен пурин те пĕр сас:
— Акă вырăссен апачĕ —
Ăшаланă тип пăрçа!

Орлов ăшĕнче вăранчĕ
Авалхи мунча юрри:
— Пыйтисем шалт ăшаланччăр,
Мунчи пултăр-и вĕри!

Çат-çат, çат-çат,
Епле милĕк çыпăçать
Сат-çат, хытăрах,
Чĕре патне пытăрах!

Çат-çат та çурăмне,
Пыйти-шăрки — лапкайне,
Фрицсене, хурахсене
Асатар леш тĕнчене.

Нумайччен Орлов çӳрерĕ
Кĕрлесе çак ял çинче.
Яланхи пекех ĕçлерĕ
Çамкана тар тухиччен.

—Ну, мĕнле, юлташăм штурмăн,
Каймалла пуль килелле?!
Леш кулать:—Пĕр бомба пур ман
Ана таçта чикмелле.

Ун валли юлмарĕ вырăн
Вутпа хыпнă çĕр çинче.
— Вырăн тин ăста-ха шырăн,
Вăркăт, ан тăр хĕрхенсе!

Ялкăшать декабрь каçĕ,
Тĕпĕнче ун — вут кăна.
Ирхине кĕрсе каяççĕ
Боецсем атакăна.

Боецсем чунтан ырлаççĕ
Кĕçĕрхи вĕçевçĕне.
Ял патне çитсен кураççĕ
Унăн витĕмлĕ ĕçне.

Килсе çапнă та хаярăн,
Кисрентернĕ вăл çĕре.
Сехрен хăпнă йытă сарĕ
Тухса чупнă йĕмсĕрех.

Ăшталаннă. Хăшĕ путлĕн
Ыйхăран та вăранман.
Хăшĕ пирĕн пата чупнă.
Хăшĕ чупнă вăрмана.

Анчах вăрçăн шав пĕр юрă —
Пĕт, тăшман, эс пĕтĕмпех!
Кăн-кăвак—декабрь юрĕ,
Кăн-кăвак — ирхи тӳпе.

Боеца боец каларĕ:
— Ак ĕнтĕ куран хăвах,
Фашистсенĕн «кăвак çарĕ»
Шăнса хытнă кăн-кăвак.

Кăвак юр çинче выртаççĕ
Кăвакарнă йĕксĕксем.
Халь «кăвак» ята тытаççĕ
Чăн тивĕçлипех вĕсем.

Тăшман пĕттĕр те çухалтăр,
Ĕçе Орловла тăвар.
Пирĕн пысăк генерал та
Пит ырларĕ Орлова.

— Пит аван Орловăн ĕçĕ, —
Терĕ вăл кулкаласа.
Кăвак марччĕ çав дивизи
Халь кăвак та... тап-таса.

(Малалли пулать.)

(Малалли. Поэма 61-мĕш номертен пичетленме пуçланă.)

Колхозниксемпе колхозницăсем! Çурхи ака ĕçĕсене хăвăрт туса ирттерсе, тискер тăшмана çĕнтерме хамăрăн фронтри тăвансене пулăшар!

Хĕрлĕ Ялав илни çине колхозниксем ĕçпе ответлеççĕ

КАЛИНИНО, апрелĕн 17-мĕшĕ. **(Хамăр корр., телефонпа).** Районри пур колхозсенче те Чăваш республикине Оборонăн Государственный Комитечĕн Хĕрлĕ Ялавне панă ятпа хаваслă та савăнăçлă митингсем пулса иртеççĕ. Ĕнер, апрелĕн 16-мĕшĕнче, Мăн Хирлепри «Строитель», Чăрăш Хирлепри «Радио», Авăçырминчи «Дружба», Эльменти Пушкин ячĕпе тăракан колхозсенче колхозниксен митингĕсем пулса иртрĕç.

«Строитель» колхозра митинга выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлекенсем, колхоз производствинче ырмиканми ĕçлекен стахановецсемпе стахановкăсем нумай пуханнă. Ялхуçалăхĕнчи ĕçсенче тата вăйлăрах ĕçлесе, стахановецсем Хĕрлĕ Ялав илме тивĕçлĕ пулнă республикăн чысне татах та çӳлерех çĕклеме пулчĕç.

— Манăн упăшка фронтра, нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешет. Эпĕ те колхоз фермисенче хамăн упăшкаран начар мар ĕçлес тетĕп. Хĕрлĕ Çара аш-какай, сĕт-çу ытларах парас ĕçе хăвăрт тата пĕр чăрмавсăр туса пыма тăрăшатăп. Республикăна Хĕрлĕ Ялав парса наградăлани пире çĕнĕ çитĕнӳсем тума хавхалантарать. Эпĕ 1943 çулта çамрăк выльăхсене пурне те тĕрĕс-текĕл ӳстерме тăрăшатăп, кашни ĕнерен 1.000 литр сĕт суса илĕп, — терĕ митингра доярка М. Шорникова юлташ.

Республика Хĕрлĕ Ялав илни çине ответлесе, колхозниксемпе колхозницăсем майăн 1-мĕшĕччен çуркуннехи уйхир ĕçĕсене лайăх та ăнăçлăн туса ирттерме обязательство илеççĕ.

С. Шадин.

КЛЕВЕР АКАС ĔÇ МĔНЛЕ ПЫРАТЬ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. **(Хамăр корр.).** Районри хăшпĕр колхозсем —Степан Разин, Буденный ячĕпе тăракан колхозсем клевер акса пĕтерпĕ. Буденный ячĕпе тăракан колхоз 15 гектар вырăнне 24 гектар акнă.

Анчах та район, пĕтĕмĕшпе илсен, клевер акас тĕлĕшпе питĕ начар ĕçлет. Нумай колхозсем паянхи куна çитсе те клевер акса пĕтермен. «Маяк» колхозра клевер вăррине маларах хатĕрлемен пирки 2 гектар çеç акнă. Карай ялсоветне кĕрекен 4 колхозран пĕри те клевер акман. «Большевик» колхоз иртнĕ çулта пуçтарса кĕртнĕ клевера халĕ те çапман. Çавăнпа унăн клевер вăрри çук. Войков ячĕпе тăракан колхозра та ĕç питĕ начар. Колхоз председателĕ коммунист Сидоров юлташ — эпир клевера çанталăк ăшăтсан, хĕвел пăхнă чухне çапăпăр-ха, тесе ларать.

Райçĕрĕç пайĕ тата унăн заведующийĕ Алексеев юлташ клевер акас ĕçе тивĕçлипе ертсе пымаççĕ.

Çуракинче

ЕЛЧĔК, апрелĕн 19-мĕшĕ. Ир. Хĕвел тухнă кăна-ха. «КИМ» колхозăн уйĕсенче ĕç вĕрет. Колхозниксем, колхозницăсем ĕçе кăвак çутăллах тухнă. Кун каçах уйра хĕрӳ ĕç пырать. Çуракине тĕплĕн хатĕрленсе тухни халь ĕçе хăвăрт туса пыма май парать. Лашасем мăнтăр, плугсен тимрисем çивчĕ, сеялкăсем, культиваторсем çирĕп. Вĕсене лайăх юсанă, колхозниксемпе колхозницăсем лайăххăрах ĕçлес хастарлăхпа çунаççĕ. «КИМ» колхоз кăçал Елчĕк районĕнчи чи лайăх ĕçлекен колхозпа—«Марс» колхозпа ăмăртса ĕçлет. Колхозниксем пĕлеççĕ, районри куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялава «Марс» колхозран илесси çăмăл пулмасть. Анчах «КИМ» колхозра çакăншăн кашни çын кĕрешет. Вĕсем хăйсен вăйĕ çине çирĕп шанаççĕ.

Акă ялтан инçех те мар пĕрремĕш бригада суха тăвать. Суха тăвакансем пурте хĕрачасем. М. Мартынова, В. Артельщикова, У. Корзакова, Т. Петрова, Е. Тарасова хĕрачасем хăйсен пĕтĕм вăйне çуракине пысăк пахалăхпа тăвасси çине хурса ĕçлеççĕ. Çамрăк вăй. Юрласа ĕçлеççĕ вĕсем. Сухалана пусă сехетсерен пысăкланса пырать. Вăйлă, мăнтăр лашасем хăвăрт утаççĕ. Çамрăк сухаçăсем талăкри ĕç нормине 100—120 процент тултарса ĕçлеççĕ.

Бригадăсем хушшинче ăмăрту пырать. Хăш бригада çуракине пысăк пахалăхпа тата хăвăрт туса ирттерĕ, колхозăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавĕ çав бригадăна куçĕ. Хĕрлĕ ялав халь тăваттăмĕш бригадăра. Вĕсем ăна çуракине пуринчен те лайăхрах хатĕрленсе тухса илнĕ. Бригадир Семен Сапронов, старши плугарь Константин Самарин—иккĕшĕ те отечественнăй вăрçă инваличĕсем. Вĕсем тăван çĕршыва тăшманран хĕçпăшалпа хастарлăн сыхланă, халь колхоз производствинче фронтри пек ĕçлеççĕ. Вĕсем пултаруллăн ертсе пынипе тăваттăмĕш бригада колхозăн Хĕрлĕ ялавне хăй аллинче тытать. Çав ялава хăйсенчех хăварассишĕн халь бригада çураки ĕçĕсене хăвăрт та пысăк пахалăхпа туса пырать.

Паян та бригада ĕçе хĕвел тухиччен тухнă. Сухаçăсем кулленех ĕç нормине 130—140 процент тултараççĕ. 6 плугпа кунне 8 гектар сухалаççĕ. А. Рывкин, Н. Козлов, Н. Жуков, В. Жуков, Н. Лаврентьев, В. Калабаев сухаçăсем икшер смена хушши ĕçлеççĕ. Бригадир Сапронов, старши плугарь Самарин юлташсем бригада ĕçленĕ участокран уйăрлмаççĕ. Ĕçĕн пахалăхне тишкерсе тăраççĕ, кăлтăксене çийĕнчех пĕтерсе пыраççĕ.

Сухаçăсем çаврăнса çитрĕç. Ирхи апат вăхăчĕ. Лашасене те сывлăш çавăрттармалла.

— Эх, пар-ха эпĕ пĕр-ик касă сухаласа килем,—терĕ старши плугарь Самарин юлташ, сухаçă аллинчен тилхепене илсе. Йытă Гитлер алла амантрĕ. Анчах сывлăх пур-ха. Колхоз производствинче те хастарлăн ĕçлĕпĕр. Йĕплĕ пулĕ тăшманшăн эпир акса ӳстернĕ тухăçлă тырпулăн кашни пучахĕ.

«КИМ» колхоз иртерех типнĕ участоксене суйласа илсе çуракине апрелĕн 10-мĕшĕнче тухнă. Анчах ик-виç кун хушши çăмăрлă çанталăк уйхир ĕçĕсене чарса тăчĕ. Халĕ хĕвеллĕ, ăшă кунсем тăраççĕ. Кашни сехетпе туллин усă курса колхоз çураки ĕçĕсене анлăн сарса пырать. Кашни çын акара пысăк тухăçлăхпа ĕçлет. Кунне 20 плугпа 23 гектар сухалаççĕ. Апрелĕн 17-мĕшĕ тĕлне 82 гектар сухаласа акнă. Ĕçре иккĕмĕшпе виççĕмĕш бригадăсем те чая юлмаççĕ, пĕр-перинпе ăмăртса çуракине хăвăрт туса пыраççĕ.

Колхоз кăçал çурхи ĕçсенче мăйракаллă шултăра выльăхсен вăйĕпе те усă курать. 6 вăкăра ĕçе вĕрентнĕ. Вĕсемпе уя вăрлăх турттарса тухаççĕ.

Колхоз правленийĕ çак ответлă вăхăтра уйрăмах оперативлăн ĕçлет. Халăха ĕçе активлăн мобилизацилене. Колхоз председателĕ Пыркин, колхоз агротехникĕ Рыбкин юлташсем ĕçĕн пур участокĕсенче те пулма ĕлкĕреççĕ. Пĕтĕм ĕçе вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек ертсе пыраççĕ.

С. Ялавин.

Вăйлăн хавхаланса ĕçлеççĕ

ШАХАСАН, апрелĕн 18-мĕшĕ. **(Хамăр корр.).** Районри пур колхозсем те çураки ĕçĕсене тума тытăнчĕç. Тăпра пур çĕрлĕн типсе çитессине кĕтсе тăмасăр, уйрăм участоксене суйласа илсе сухалаççĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем, вăйлă тырпулăн никĕсне ăнăçлăн хывса хăварассишĕн фронтри пек хастарлăн ĕçлеççĕ.

Пакашри «Активист» колхоз кăçал çурхи тырăсене 6 талăк хушшинче акса хăварассишĕн кĕрешет. Республика Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илни çинчен пĕлтернĕ хыççăн колхозниксем ĕç тухăçлăхне татах та ӳстерчĕç. Сухаçă Н. Семенов ĕç нормине кулленех 130—140 процент тултарать. О. Миронова, С. Спиридонова колхозницăсем талăкра икшер гектар сухалаççĕ.

Агротехника кăтартăвĕсене тĕплĕн пурнăçласа пырасси тĕп вырăнта. Сухаçăсем ĕçĕн ответлăхне лайăх туяççĕ. Тăпрана 14—16 сантиметр тарăнăш сухалаççĕ. Тыра акакансем те паха ĕçлеççĕ. Е. Анисимов, Г. Андреев юлташсем апрелĕн 16-мĕшĕнче нормăна 150 процент тултарнă.

В. Веселов

Шупашкар хулинчи парти активĕн пухăвĕ

Апрелĕн 17-мĕшĕнче пулса иртнĕ хулари парти активĕн пухăвĕ республика столицине тасатса йĕркене кĕртес ыйтăва сӳтсе-яврĕ. Ку ыйтупа ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хула совет исполкомĕн председателĕ Аникин юлташ доклад туса пачĕ.

Вăрçă вăхăчĕ пулин те, партипе правительство хуласене юсаса йĕркелес ыйтăва пысăка хураççĕ. Çак ĕç валли тăван çĕршыв çулсерен нумай укçа-тенкĕ уйăрса парать. 1943 çулта кăна Шупашкар хулине юсаса йĕркене кĕртме 2,5 миллион тенкĕ укçа уйăрса панă. Çак ĕçе мĕншĕн пысăка хурса хаклани паллă ĕнтĕ: хулара тасалăхпа культура туса хуни—Хĕрлĕ Çарăн тылне тĕреклетме пулăшать, промышленность предприятийĕсен ĕçне лайăхлатма майсем туса парать.

Анчах Шупашкар хула совечĕн исполкомĕ, хулари предприятисемпе учрежденисен руководителĕсем хулана тата поселоксене юсаса йĕркелес ыйту çине кирлĕ пек çаврăнса пăхмаççĕ-ха. Столицăри пуçламĕш парторганизацисемпе общественноçа хула хуçалăхне кăтартуллăн тытса тăрассишĕн кĕрешме начар мобилизациленĕ, çавăн пирки хулара çамрăк йывăçсене тирпейлĕ упраса тăмаççĕ, хуралтăсен пĕр пайĕ япăхнă, хула урамĕсемпе картишсене тасамарлăхран тасатас ĕç сӳрĕккĕн пулса пырать.

Докладчик пурăнмалли çуртсемпе картишсене тата çамрăк йывăçсене кирлĕ пек сыхласа усраманнине çирĕплетсе паракан фактсем илсе кăтартать, хулана юсаса йĕркелес тĕлĕшпе совет, хуçалăх тата парти организацийĕсен, хулари пĕтĕм общественноçăн куллен ĕçлес пулать, тесе паллă тăвать.

Пренире 10 çын тухса каларĕç. Вĕсем хулана юсаса йĕркене кĕртес ĕçри çитменлĕхсене палăртрĕç.

Блощенко юлташ хулари водопровод çителĕксĕр ĕçлени, хула çыннисене начар пахалăхлă шыв парса тăни çинчен калать. Артеменко юлташ пристань тата чугунçул станцийĕ патне пымалли çулсене йĕркене кĕртмелли, хулара тасалăхшăн çине тăрса кĕрешмелли çинчен калать.

ЧАССР Шалти Ĕçсен Халăх Комиссарĕн заместителĕ Никитин юлташ хула хĕрринчи вырăнсемпе хула çывăхĕнчи колхозсене тасатса йĕркене кĕртесси çине çаврăнса пăхма хушать. Стешов юлташ (Стройтрест) хăшпĕр строительство материалĕсене республикăрах тăвас ыйтăва лартать. Пире пурă, краскăсем кирлĕ,—тет вăл,—вĕсене районсенче тума пулать. Анчах çак ĕçе организацилес тĕлĕшпе промкооперации пуçарулăх кăтартмасть-ха.

Актив пухăвĕнче Чăваш АССР Совнаркомĕн Председателĕ Матвеев юлташ тухса каларĕ.—Пирĕн предприятисемпе учрежденисен чылай руководителĕсем,—тет Матвеев юлташ,—хулана юсаса йĕркелес ыйтăва çителĕксĕр хаклаççĕ, хăшпĕрисем тата ку ĕçе йăлтах хула исполкомĕ çине йăвантарма пăхаççĕ. Çакă вăл йăнăш. Хулана юсаса йĕркене кĕртме пĕтĕм общественноçа çĕклес пулать. Пурăнмалли çурт-йĕрсене тирпейлĕн тытса усрасси— ку ĕçри тĕп задачăсенчен пĕри пулса тăрать. Коммуналлă çуртсене юсас ĕç валли сахал мар укçа уйăрса панă, анчах нумай чухне вĕсемпе усă курмаççĕ е тĕрĕс мар усă кураççĕ. Ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хула совет исполкомĕ пĕлтĕр çуртсене капитальнăй ремонт тума уйăрса панă укçан 20 процентне çеç расходланă, ремонт ĕçне питех те кая юлса тытăннă. Ялан тенĕ пекех ĕç вăйĕпе материал çукки çине йăвантараççĕ. Чăнах, йывăрлăхсем пур. Анчах хамăр ытларах пуçарулăх кăтартсан, ытларах тăрăшсан, вырăнти ресурссемпе анлăн усă курсан, эпир ку тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттернĕ пулăттămăр. Хула халăхне хăйсем пурăнакан хваттерсемпе çуртсене юсас ĕçе явăçтарманпа пĕрех. Пурăнмалли çуртсене тăтăшах тĕрĕслесе тăмаççĕ, çакă вăл пысăк укçа-тенкĕсем расходласси патне илсе пырать. Шупашкар хулине санитари тĕлĕшĕнчен тасатас ĕç те тивĕçлипе пулса пымасть-ха. Хулана тасамарлăхран тасатас тĕлĕшпе пулса иртнĕ икэрнелĕх вăхăтĕнче хăшпĕр ĕçсене тунă. Анчах çакă вăл пуçламăшĕ кăна-ха.

Матвеев юлташ хулара санитари правилисене пăснине фактсемпе çирĕплетсе парать. Парти активне хулара тасалăхпа культура туса хурас тĕлĕшпе большевикла кĕрешме чĕнет. Общественноçăн Хула совет исполкомне çулйĕре юсас ĕçре анлăн пулăшмалла.

Пренире çавăн пекех Майковский, Петрушова (Водосвет), Подгорнов (чугунçул станцийĕ), Иванов (пристань), Кудряшова (Наркомхоз) тухса каларĕç.

Актив хăй йышăннă решенире республика столицине юсаса йĕркене кĕртес тĕлĕшпе тумалли мероприятисене палăртрĕ.

Чехословаксен СССР-ти çар чаçĕн салтакĕсемпе офицерĕсене орденсемпе медальсемпе парса наградăланă

СССР Верховный Совет Президиумĕ апрелĕн 17-мĕшĕнче кăларнă указ тăрăх, нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан гĕрçшӳрх командовани хушшине кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çав ĕçре хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн çаксене наградăланă:

Ленин орденĕпе—Людвиг Иванович Свобода полковникке;

Хĕрлĕ Ялав орденĕпе—15 çынна наградăланă;

Отечественнăй вăрçăн I-мĕш степеньлĕ орденне—1 çынна;

Отечественнăй вăрçăн II-мĕш степеньлĕ орденĕпе—20 çынна;

Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе — 22 çынна;

«За Отвагу» медальпе—26 çынна;

«За боевые заслуги» медальпе—1 çынна наградăланă. (ТАСС).

Совет самолечĕсем Данциг, Кенигсберг, Тильзит хулисене тапăннă

Апрелĕн 17-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле совет самолечĕсем Данциг, Кенигсберг, Тильзит хулисем çине вĕçсе пырса, икĕ сехет хушши çав хуласенчи çарпа промышленность объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахнине пула пысăк пушарсем тухнă тата вăйлă взрывсем пулнă.

Виçĕ самолетсăр пуçне пирĕн самолетсем пурте хăйсен базисене таврăннă.

Ют çĕршывсенче

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, апрелĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Çывăх Хĕвелтухăçĕнчи хĕçпăшаллă вăйсен штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, апрелĕн 16-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕ Неаполь гаваньне тапăннă. Гаваньри объектсене чылай пысăк сиен кӳнĕ. Хулари çуртйĕрсем çине те бомбăсем пăрахнă. Çав çĕрех Англи авиацийĕ Мессинăна (Сицилия) тата Россанăна (Кăнтăр Итали) пырса тапăннă.

Америкăн сывлăшри вăйĕсен штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, «Либерейтор» йышши бомбардировщиксем ĕнер кăнтăрла Каганине вĕçсе пырса тапăннă.

ЛОНДОН, апрелĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, апрелĕн 16-мĕшĕнче кăнтăрла Америка авиацийĕ Лориана тата Брест порчĕсене вĕçсе пырса тапăннă.

ЛОНДОН, апрелĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, апрелĕн 17-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕ Пльзенри (Чехословакия) Шкода завочĕсене тата Германин çар промышленноçĕн центрĕсене—Мангеймпа Людвигсхафена тапăннă. Çав операцисене бомбардировочнăй авиацин 600 ытла самолечĕ хутшăннă. Англичансен 55 самолечĕ хăйсен базисене таврăнман.

ЛОНДОН, апрелĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Американецсен Европăри хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕн пĕлтерĕвĕнче каланă тăрăх, апрелĕн 17-мĕшĕнче кăнтăрла американецсен йывăр бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем Бременри «Фокке—Вульф» авиаци заводне атакăланă. Вăл районта нумай бомбăсем çурăлнине паллă тунă. Истребительсемсĕрех вĕçнĕ бомбардировщиксем зенитнăй артиллерирен пенине тата тăшман истребителĕсем вăйлăн хирĕç тăнине пăхмасăрах, вĕçсе пырса тапăннă. Америка бомбардировщикĕсем тăшманăн 50 самолетне пĕтерсе тăкнă. Американецсен 16 бомбардировщикĕ каялла таврăнман.

ТУНИСРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, апрелĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер Тунис фронтĕнче Меджес—Эль-Бабран çурçĕртерехри участокра вырăнти çапăçусем хастарлăн пулса пынă. Çавăн пекех тусен районĕнче Энфидавилль линийĕн хĕвеланăç флангĕнче франци чаçĕсем çапăçаççĕ. 8-мĕш арми кĕрешекен районта хăйсен хастарлăхне патрульсем палăртаççĕ. Пĕтĕмĕшпе илсен, пĕтĕм фрончĕпех лару-тăрура улшăнусем çук, темелле.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чăваш АССР Наркомземĕн администрацийĕ, партбюровĕ тата местнкомĕ апрелĕн 18 мĕшĕнче землеревизор Геннадий Яковлевич ГЕРОНТЬЕВ вăхăтсăр вилни çинчен хурланса пĕлтереççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, промышленность пайĕн—3—99, ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

НТ 1029 Типография № 1, Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф. 6. 58. 42 п.